**Вара, вара…**

– Ку задача мĕн вара.!
Шутлăп-ха ăна вара.
Халь кăштах вылям тухса,–
Терĕ Павăл васкаса.
Тухрĕ Сирпĕнчĕ вăштик,–
Тухрĕ, сирпĕнчĕ шĕвик!
Шап-шурă юр пуличчен
Ашрĕ, сикрĕ кĕрт çинче.
Чупрĕ, чупрĕ те вара
Таврăнчĕ киле аран.
– Хырăм выçрĕ пар апат!
– А задача? – тет аппа.
– Э-э, задача мĕн вара!
Шутлăп-ха ăна вара.
Çирĕ...
Илчĕ Вăл кусар, –
Пирĕн Павăл ĕçсĕр мар.
Тем тăвать, тем ăсталать,
Тем шаккать, тем каскалать,
– Э-э, задача мĕн вара?!
Шутлăп-ха ăна вара.
Тем чухлех чĕлсен, кассан,
Урайне çъп тултарсан
Ывăнчĕ пулас, вăл кĕç
Тупрĕ Урăх «кирлĕ ĕç»,
Павăл кушакпа вылять,
Çухăртать ăна, кулать.
– Э-э, задача мĕн вара.!

Шутлăп-ха ăна вара, –
Терĕ Павăл, – тăвăп-ха. –
Выртрĕ, туртрĕ
Ыйăха.

Çакăн хыççăн Палляна
«Иккĕ» паллă кап кăна
Лартнă панă.
Мыскара –
Ак сана «вара», «вара»!

*Алентей, В. Вара, вара : [сăвă] / В. Алентей // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 168.*